*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

39 (2451) №
Хакĕ ирĕклĕ

1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

# ХРЕСЧЕН САССИ

КАНУ КУНĔН КĂЛАРĂМĔ

ЭРНЕ КУН

2014, çу, 23

ЧĂВАШ ЕН ЯЛ-ЙЫШ **КИЛ** ХŬТЛĔХ СЫВЛĂХ ТĔПЕЛ

ШУХĂШ

## Хамăр айăплă мар-и?

Аслисем çамрăксене вăрçаççĕ: эпир апла пулман, эпир капла пулнă... Çапла, пире иртĕхтермен. Ĕçлеттернĕ: килте те, шкулта та. Шкул пахчинче ушкăнпа ĕçлесе савăннă, тупăшса шыв йăтнă, купăста йăранĕсене шăварнă. Ĕç пăсман пире – çын тунă. Ачасене эпир халĕ хамăр пăсатпăр. Çаплах калас килет манăн.

Кĕçĕн ывăлăм çак уйăхра ача сачĕне сыв пуллашать. Паллă пулăм темелле. Хам та савăнатăп. Уйăхсерен виçĕ пин тенкĕ кайса пыратчĕ те – перекетленет малашне. Апат çитернĕшĕн, вĕренӳ кружокне, сывлăх урокне çӳретнĕшĕн – пĕтĕмпех тӳлемеллеçке. Театр курма, тĕрлĕ уяв ирттерме, ачасем валли хут-кăранташ, тетте туянма пуçтараканнине шута илмесĕр ку. Юрĕ-ха, пĕтĕмпех хыçа юлчĕ темелле. Анчах садикрен тухса кайнине паллă тума мĕншĕн пилĕк пин тенкĕ таран пухмаллине ниепле те ăнланмастăп. Воспитательсене, садик ĕçченĕсене парне парса хăварма хăнăхрăмăр ĕнтĕ. Темиçе çул каялла, асли садикпе сыв пуллашнă чухне те вĕсене сумлă пакетпа пĕрле ылтăн мăй çыххи тыттарса хăварнăччĕ. Ку хутĕнче те ырă йăлана пăсмăпăр. Анчах мĕншĕн садикри уяв хыççăн ачасене ресторана çити илсе каймалла? Çын пуçне 2,5 пин тенкĕлĕх меню сĕнекен ресторана? Пĕрисем çемйипех (ашшĕ-амăшĕ, ачи) пыратпăр терĕç. Çийĕнчех 7,5 пин тенкĕ кăларса тыттарчĕç. Укçан шучĕ çук чухне, тен, кăларса хума та пулать пулĕ. Пĕлместĕп. Анчах мĕн тума кирлĕ çакă? Хамăр ачасене ниçта кайса кĕрейместĕр юратнине кăтартма-и? Кам умĕнче мухтанатпăр? Мăнтăрпа ахăратпăр. Виçелĕх туйăмне çухатса ачасене иртĕхтеретпĕр.

Шупашкарта çав тери чаплă ача сачĕсем те пур. Чаплă пулĕ ĕнтĕ – ашшĕ-амăшĕ уйăхсерен 10 пин тенкĕ тӳлет пулсан. Ун пеккисене çӳрекенсем сыв пуллашнă чухне мĕн чухлĕ пуçтараççĕ-ши?

Чăваш тĕнчинче этем чунĕ, пахалăхĕ, чысĕ укçа-тенкĕпе виçĕнмест. Чыспа ăсхакăл пуянлăхне ĕçпе, тасалăхпа, ăспа та пултарулăхпа виçме пилленĕ. Кĕçĕннисем аслине пăхăннă, ун пек пулма тăрăшнă. Мăннине пулăшайсан савăннă. Эпир вара ачасене пĕчĕклех укçапа ааштаратпăр. Çуралнă куна паллă тума та хăшĕ-пĕри ача сачĕсене клоунсене, трансформерсене чĕнсе илет. Çапла, ун пеккисем те пур. Ывăлăм каласа панинчен пĕлетĕп. Трансформер мĕнне те пĕлменччĕ-ха, робот пек япала иккен. Ачине савăнтарма ашшĕ-амăшĕ ятарласа робот тумне тумланнă çынна чĕнсе илет.

Вăрçă вăхăтĕнче ӳснисем алла сахăр катăкĕ тытиччен малтан шĕшлĕпе пуçăт, йĕвен, кунтăкпа çурла тытнă. Ман ӳсĕмри ăру та, 70-80-мĕш çулхисем, сĕтел çинче канфет-пĕремĕк пултăр тесен нумай ĕçлемеллине ăнланса ӳснĕ. Укçа пулă хуппи маррине лайăх чухланă. Питĕ пылак çиес килнĕ чухне пушă кĕленче тупса ăна лайăх çуса лавккана кайса пани аса килет.

2-мĕш стр. ➔

КĔСКЕН

**Кăçалхи ака уйăхĕн пуçламăшĕ тĕлне мĕн пур категорири хуçалăхсенче мăйракаллă шултра выльăх 211,4 пин пуç пулнă (иртнĕ çулăн çак тапхăртинчен 1,8 процент сахалрах), çав шутра ĕне 93,5 пин пуç (5,7 процент сахалрах), сысна – 174,4 пин пуç (16,3 процент сахалрах), сурăх, качака – 196,8 пин пуç (0,4 процент сахалрах), чăх-чĕп – 3925,6 пин (4,9 процент ытларах).**

**Раççей ял хуçалăх надзорĕн Чăваш Енри управленийĕн кăтартăвĕсем тăрăх – хальхи вăхăтра республикăри 21 районтан 18-ăшĕнче (339 ялта) çĕр улми нематоди тупса палăртнă. Уйрăмах кăнтăр енчи районсем шар кураççĕ. Усал чире пула тухăç самай чакма пултарать.**

**Çанталăка сăнаса тăракансем ку эрне вĕçленичченех питĕ шăрăх çанталăк пуласса пĕлтереççĕ. Кăнтăрла сывлăш температури 30 градус таранах çитĕ. Пушар тухас хăрушлăх çав тери пысăк.**



Сергей ЖУРАВЛЕВ сăн ӳкерчĕкĕ

**ПАЯН** кун тăршшĕ 16 сехет те 56 минут. Уйăх тулса пырать. Симон кунĕ. Çак кун çĕр канлĕхне хускатман, кĕреçе тавраша тытман. Сиплĕ ӳсентăранпа вĕсен тымарĕсене пухнă. Çара уран утма тăрăшнă.

**ЫРАН** – Пăр çутараканăн кăмăлне çавăрмалли кун. Уйра ĕçлемен – акнă тырпула пăр çапса каясран хăранă. Кун тĕтреллĕ те çумăрлă тăрсан çу тăршшĕпех йĕпе-сапаллă пулĕ тенĕ.

**ВИÇМИНЕ** – Епифан кунĕ. Хĕрсем чи илемлĕ кĕписене тăхăнса пилеш йывăççи патне пынă, кил-çурта пушартан сыхлама ыйтнă. Пилеш ытти инкекрен те хăтарасса ĕненсе ăна кил çывăхĕнче ӳстернĕ. Пĕвере кăкшăм курăкĕ курăнсан текех сивĕ пулмĕ.

ЫЙТУ – ХУРАВ

## Сăлтавсăр тăкăнмасть

**? Çулсеренех слива йывăççĕ чечеке лайăх ларать, анчах çырли пĕчĕклех питĕ нумай тăкăнса пĕтет.**

**Иван МИХАЙЛОВ. Çĕрпӳ.**

Çуркунне тата çуваррине çитиччен нӳрĕк çителĕксĕр пулсан çимĕç тĕвви хăвăрт тăкăнса пĕтет. Слива тымарĕ тарăнах каймасть, хăйне кирлĕ нӳрĕке вăл çĕр айĕнчен илеймест. Çанталăк шăрăх тăнă вăхăтра тутлăхлă япаласем илеймен пирки çимĕç пĕчĕклех тăкăнать. Типĕ çанталăкра слива тĕмне 4-6 витре таранах шăвармалла.

Чечеке ларас умĕн сливăна органика е минерал удобренийĕпе апатлантарни усăллă. Ĕне тислĕкне шывпа çак виçепе хутăштармалла: 1:10, чăх каяшне – 1:15. Минерал удобренийĕсенчен кали е кальци селитри (10 л шыва 1 апат кашăкĕ) усă курсан аван. Çамрăк тĕме 20-30 л шăвараççĕ пулсан, çитĕнни – 40-60.

Слива хурчĕ тапăнсан та çырла вăхăт çитмесĕрех тăкăнса пĕтет. Çырлаллă пулас тесен йывăç чечеке лариччен темиçе кун маларах ăна им-çампа пĕрĕхтермелле. Калăпăр, новактионпа (13 мл), актарăпа (1,2-1,4), фуфанонпа (10 мл). Препарата 10 л шывра ирĕлтермелле. Чечеке ларса сӳнсенех тепĕр хут сирпĕтмелле.

## Сирпĕтни пулăшмарĕ

**? Иртнĕ çул чиепе черешня çулçисем пĕтĕрĕнсе хура пăнчăсемпе витĕнчĕç. Им-çампа та сирпĕтрĕм – усси пулмарĕ.**

**Лариса ИГНАТЬЕВА. Елчĕк районĕ, Аслă Елчĕк.**

Тĕшĕллĕ йывăçсене чир-чĕртен тата сиенлĕ хурт-кăпшанкăран пĕрре сирпĕтнипех сиплеме май çук. Кукша ерсен пушшех те, хура пăнчăсем пулни шăпах çак чир çакланни çинчен систерет. Çу каçипе 4-5 хут сирпĕтмелле: кăчкă кӳпчене тапхăрта, сапăлас умĕн, чечек папки кĕренленес чух, çеçки тăкăннă хыççăн, чечеке ларса сӳнсен 25 кунран. Препаратсенчен Азофос, бордос шĕвекĕ, Скор, Фундазол усă курма юрать, пĕрин хыççăн теприне.

Çулçă пĕтĕрĕнни хуртпа çыхăннă. Сиенлĕ хурт-кăпшанка Инта-Вир, Искра, Кинмикс, Фастак йышши им-çампа сирпĕтсе пĕтерме пулать. Инструкцире кăтартнă пек усă курмалла.

## Хура груша

**? Иртнĕ çултанпа груша çинче хура пăнчăсем пулаççĕ, вĕсем пысăкланса пыраççĕ. Каярах хайхи хура грушăсем ӳкеççĕ. Хăш-пĕр груша вара пĕркеленсе типет, çĕре ӳкет. Çак инкекпе мĕнле кĕрешмелле-ши?**

**Анатолий НИКОЛАЕВ. Куславкка.**

Грушăна кукша чирĕ ернĕ курăнать. Чире пуçараканĕ – çĕре ӳкнĕ çулçăпа туратра хĕл каçакан кăмпа.

Хура кĕр умĕн йывăçсене 7 процентлă мочевина е 10 процентлă аммиак селитрин шĕвекĕпе сирпĕтмелле. Йывăçа сирпĕтнипе пĕрлех çĕре те питĕ лайăх йĕпетмелле, мĕншĕн тесен выртакан çулçăра инфекци юлать.

Кăчкă кӳпчеленнĕ тапхăрта йывăçа 3 процентлă бордос шĕвекĕпе пĕрĕхтермелле. Унтан чечеке ларас умĕн, кайран чечеке ларса сӳнсен фунгицидпа (Скор, Топаз) сирпĕтмелле.

ПАХЧИ-ПАХЧИ

## Кăшт силлемелле

Грушăпа улмуççисем шап-шурă çеçкере. Апла вăрăм сăмса (долгоносик) хăйĕн ĕçне пуçăннă ĕнтĕ. Ама хурт пĕр чечек папкинчен теприн патне куçать, кашнине çăмарта хурса хăварать. Унтан тухакан хуртсем вара çимĕçпе шăрка тунине çисе яраççĕ, çавна май чечек папки çурăлса ĕлкĕреймесĕрех типет.

Вăрăм сăмсапа тĕрлĕ меслетпе кĕрешмелле. Экологи тĕлĕшĕнчен чи аннăçли – йывăçа кăштах силлесе илни. Ир-ирех, сывлăш температури 8-10 градусран иртиччен йывăç айне брезент сарса туратсене силлемелле. Çанталăк сулхăн тăнă вăхăтра хуртсем çирĕп лармаççĕ, вĕçме пултараймаççĕ. Хăвăртах çĕре ӳкеççĕ. Вĕсене материал çинчен çунакан кăвайта силлесси е краççын янă кĕленчене чăмтарасси çеç юлать. Хурткăпшанкă тытмалли кăшăл (ловчие пояса) пирки те манмалла мар. Материал çине ӳкмен хурт кайран каллех йывăç çинех хăпарать-çке.

ПĔЧĔК ВĂРТТĂНЛĂХСЕМ

✓ Фитофтороз ан çулăхтăр тесен помидор калчине пахчана куçарса лартсан пĕр процентлă бордос шĕвекĕпе сирпĕтмелле, вунă кун иртсен – тепĕр хут. Виççĕмĕш хут – помидор çур метр çӳллĕш ӳссен.

✓ Купăста лартнă чухне калчасен хушшине эрĕм лартма е татса хума сĕнеççĕ. Купăста лĕпĕшĕ лармĕ.

✓ Кабачокпа патиссон калчине юнашар йăрансенче çитĕнтерсен пĕрпĕринпе пĕтĕленнипе вĕсен тухăçĕ пысăк пулать. Анчах вĕсен вăррине тепĕр çул валли хăварма юрамасть – кабачок та, патиссон та мар çимĕç кăна çитĕнĕ.

***Йод çитмесен ӳсен-тăран япăхрах ӳсет. Çимĕç тĕвви хăвăрт чăмăртантăр, шултра пултăр тесен пахчана куçарса лартсан ăна йод хушнă шывпа (3 л пуçне 1 тумлам) шăвармалла. Йод çырла тĕмĕшĕн те аван: чечекĕ сӳнне хыççăн ăна та çавнашкал шывпа шăвармалла.***

ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 23.05 | 24.05 | 25.05 | 26.05 | 27.05 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Температура, °C | 2-4 сехетре | +21 | +16 | +18 | +19 | +12 |
| | 14-16 сехетре | +26 | +28 | +29 | +22 | +15 |
| Çумăр çăвать | | – | – | – | – | |
| Атмосфера пусăмĕ, мм. | | 752 | 753 | 749 | 749 | 745 |

## КĔСКЕН

**Нумаях пулмасть пурăнма кирлĕ апат-çимĕç пуххин чи пĕчĕк виçине палăртнă: 2798 тенкĕ. Çынна пĕр уйăх тăранса пурăнмалăх ку. Сахал-и? Иртнĕ çулхи çак тапхăртипе танлаштарсан 412 тенкĕ ытларах.**

**Кăçалхи пĕрремĕш кварталта республикăра 4111 ача çуралнă, 4032 çын вилнĕ. Нумайăшĕ юн çаврăнăшĕн тытăмĕн чирĕсене (32,9 процент), усал шыçăсене (10,7), сывлав органĕсен (6,5), апат ирĕлтерекен органсен (6,3) чирĕсене тата ытти сăлтава пула вилнĕ.**

## ШУТА ИЛМЕ

### Юлашки куна ан хăварăр

Пурăнмалли уйрăм çурта çăмăллатнă майпа – халăхра «дача амнистийĕ» тенĕскере – харпăрлăха çырма уйăрнă вăхăт нумаях та юлмарĕ. Раççей реестрĕн Чăваш Енри уйрăмĕ ку ĕçе туса ĕлкĕрейменнисене васкама хистет. Çурт-йĕр çавăрма е хушма хуçалăх тытма çĕр лаптăкĕ илсе ун çине çурт лартнисене пырса тивет ку. 2015 çулхи пуш уйăхĕн 1-мĕшĕччен çеç ăна малтанхи майпа тума пулать. Регистрацилесси 5-10 куна тăсăлать, пошлина хакĕ 200 тенкĕ. Кайран пурăнмалли çурта харпăрлăха илесси кăткăсланать: çурта хута яма ирĕк илме тивĕ. Куна валли нумай хут пуçтармалла. Çĕр лаптăкĕпе хуçаланма ирĕк панине çирĕплетекен документран пуçласа çуртра электричество, канализаци, газ çыхăнăвĕсем епле вырнаçнине кăтартакан схема таранах.

Çĕр лаптăкне урăх тĕллевпе – хушма хуçалăхпа дача, пахча, сад, гараж тума илнĕ пулсан, ăна харпăрлăха кирек хăш вăхăтра та çырма май пур, уншăн ятарлă срок палăртман.

Кăçал кăна пирĕн республикăра «дача амнистийĕпе» килĕшӳллĕн пурăнмалли 1,5 пин уйрăм çурта регистрациленĕ. Саккун ĕçлеме пуçланăранпа вара 91 пин уйрăм çурта харпăрлăха илнĕ.

## СИППЕ КАЙТĂР

### Сахăр диабечĕ

**Сахăр диабечĕ чухне организма инсулин гормонĕ çитмест. Тухтăр çырса панă эмелпе сипленнипе пĕрлех хăшпĕр ӳсен-тăранпа та усă курма юрать. Вĕсенче вара сахăр шайне чакаракан гликозидсем пур.**

Калăпăр, кĕтмел (брусника) çулçи. Вĕреме кĕнĕ 1 стакан шыва вĕтетнĕ çулçа 1 чей кашăкĕ чухлĕ ярса пăс çинче 15 минут тытмалла, çур сехет тăрăлтарса лартмалла. Кунне 3 хут пĕрер кашăк ĕçмелле.

Вĕреме кĕнĕ 1 стакан шыва 2 кашăк мăян çулçи, 1 кашăк вĕлтĕрен чечекĕ, çур кашăк чухлĕ çирĕк çулçи (çу уйăхĕнче татнине) ярса пăс çийĕн 15 минут тытмалла. Ирхи апат умĕн тата çывăрма выртиччен пĕрер кашăк ĕçмелле.

### Хамăр айăплă мар-и?

← 1-мĕш стр.

Кашни пусĕ шутра пулнă. Инди фильмĕсене кăтартатчĕç. Кино курассишĕн анне укçа патăр тесе вăл мĕн хушма пултарнă ĕçсене малтанах туса хунă. Халĕ вара? Тутлă çиес килет-и? Тархасшăн. Кĕсье телефонĕ кирлĕ-и? Акă – сенсорли, планшет, компьютер... Ăс-тăн хăвачĕ ача чухнехине лайăх упрать. Янттипе ӳссен кайран та янттипех пурăнас килет.

... Çук, килĕшмерĕм укçа пама. Пилĕк пинпе ресторанти пек кăна мар сĕтел хатĕрлеме хам та пултаратăп. Шкула кайма костюмпа сумка илмелĕх те укçа юлать.

Выльăх-чĕрлĕхе калча çине кĕрсе кайиччен пăрмалла. Пăрса ĕлкĕреймесен пушăпа хăмсарса та, кăшкăрса та ывăнатăн. Таптаннă калчашăн та явап тытма тивет. Хальлĕхе явап тытма тивесси çинчен шухăшламастпăр та, шухăшлас та килмест пирĕн. Йăлтăр-ялтăр залра, пысăк сĕтел хушшинче ларасси илĕртӳллĕрех-çке...

**Елена НИКОЛАЕВА.**

## ВУЛАКАН СĔНЕТ



### Ыратакан вырăна – ыхра

**Радикулит канăçсăрлантарсан** 1 стакан чухлĕ теркăланă йӳç кăшмана пускăч витĕр кăларнă 1 пуç ыхрапа хутăштармалла. Хутăша ыратакан вырăна 10-15 минутлăха хумалла. Ӳте чĕпĕтме пуçличчен тытмалла, кайран çав вырăна ăшăтнă тип çупа сĕрсе çăм тутăрпа çыхмалла.

**Алексей МИХАЙЛОВ.**

### Куçа – укроп шывĕ

**Хĕрĕхрен каçсан куç çивĕчлĕхĕ чакма пуçларĕ: темиçе куçлăх улăштарма тиврĕ, тăтăшах куç ывăннине туяттăм. Анчах йывăрлăхран тухма пултартăм. Паян кун та çак рецептпа усă куратăп.**

Тин вĕретнĕ 1 стакан шыва 1 кашăк укроп вăрри ярса пĕр каç тăрăлтарса лартмалла, сăрăхтармалла. Ирлĕ-каçлă куçа икшер тумлам ямалла. Сиплев тапхăрĕ – пĕр уйăх, унтан 2 эрне канмалла, кайран – тепĕр хут. Çулталăкра çапла 3-4 тапхăр сипленмелле. Укроп шывне сивĕтмĕшре 3 талăкран ытла упрама юрамасть.

**Александра СЕМЕНОВА.**

### Эрозирен – пылпа пулă çăвĕ

**Амалăх мăйĕн эрозийĕнчен пулăшнă меслет çинчен çырса пĕлтерес килет.**

Пĕр тан илнĕ пылпа пулă çăвне пĕрлештермелле. Темиçе хут хутлатнă марля татăкне çак хутăшпа сăрхăнтарса каççерен амалăх умне чикмелле. Ирпе туртса кăлармалла. Кун тăршшĕнче икĕ хутчен календула настойĕпе спринцевани тумалла: вĕреме кĕнĕ 1 стакан шыва 1 кашăк календула чечекĕ ярса термоса ямалла, сехете яхăн кĕтмелле. Çапла сывалса çитиччен тумалла.

**АННА.**

## ЭСИР ЫЙТНĂЧЧĔ

### Лĕкĕленет, кĕçĕтет

**? Ку таранччен лĕкĕ мĕнне пĕлменччĕ, халĕ вара пуç кирĕкленет, кĕçĕтет. Мĕнпе çыхăннă-ши çакă?**

**СВЕТЛАНА.**

Сăлтавĕ тĕрлĕ пулма пултарать: стресс тӳссе ирттерни, çу парĕсен ĕçĕ пăсăлни, тĕрĕс мар апатланни, гормон улшăнăвĕ (çие юлсан, климакс вăхăчĕ). Çӳçе час-часах сăрланипе, хими мелĕпе кăтралатнипе те çыхăнма пултарнă. Анчах тĕп сăлтавĕ кăмпа тĕвви ӳснипе, çавна май пуç тирĕ улшăнса пынипе çыхăннă.

Дерматологпа канашламалла. Пуçа ятарлă шампуньпе – кăмпа тата микроб чирĕсене хирĕç кĕрешеккеннипе – çума тăрăшмалла.

### Пуç шавлать

**? Пĕрмаях пуç шавлать. Темиçе çул ĕнтĕ. Хам тĕллĕн сывалма та хăтланса пăхнă – усси çук.**

**Ирина КЛИМОВА.**

Ытларах чухне пуç мимине юн çителĕксĕр пынă чухне пулать ку. Юн сахал пыни вара атеросклерозпа çыхăннă. Мăй остеохондрозĕ, гипертонипе хăлха чирĕ чухне те пуç шавлама пултарать. Невропатологпа канашламалла, çурăм шăммине тĕрĕслеттермелле.

*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа*

## КАМĂН МĔН ЫРАТАТЬ?

**Хырăмлăх ай парĕн ĕçне лайăхлатма.** Вĕреме кĕнĕ 1 л шыва 1 стакан хурăн кăчки (березовые сережки), çур стакан симĕс петрушка, 1 кашăк матрӳшке курăкĕ (душица), 6 хурлăхан çулçи ярса йăваш çулăм çинче 5 минут вĕретмелле, 1 чей кашăкĕ лимон сĕткенĕ, тутă кĕмелĕх пыл хушмалла. Чей вырăнне кунне 2-шер стакан ĕçмелле.

**Гайморит.** Çак рецепт операци тумаллинчен те хăтарса хăварма пултарать. 70 градуслă 100 мл спирт çине 30 г чухлĕ прополис вĕтетсе ямалла, тĕксĕм тĕслĕ кĕленчене ярса çутă лекмен вырăнта виçĕ кун тытмалла. Сăрăхтармалла. Унтан сипленмелли шĕвек хатĕрлемелле: тĕксĕм тĕслĕ кĕленчене шприцпа ĕмтерсе 10 мл сырлан çăвĕ (облепиховое масло), 7 мл ацетат ретинолĕ (аптекăра пур) тата 3 мл прополис настойки ямалла. Сăмсана кунне 3 хут, апат хыççăн, 2-шер тумлам ямалла.

**Шăмăсене çирĕплетме.** Çăмарта хуппине лайăх çуса типĕтмелле. Порошок евĕр пуличчен лайăх вĕтетмелле. Апатпа пĕрле кунне 1 хут çуршар чей кашăкĕ чухлĕ çимелле. Сиплев тапхăрĕ – 2 уйăх.

**Хулăн чĕрнене çемçетме.** Çывăрма выртас умĕн тăварланă хăяра тăршшĕн касса чĕрне çине хумалла. Полиэтилен хутаçпа нуски тăхăнса выртмалла. Ирпе чĕрнене çăмăллăнах касма май килĕ.

**Пуç аптратсан.** 1 л шыва 1 кашăк тăвар ярса пăтратмалла. Уйрăм савăта 80-100 г 10 процентлă нашатырь спирчĕ тата 10 г камфора спирчĕ ярса пăтратмалла. Хутăша тăвар шывĕпе пĕрлештермелле. Савăта хупса шурă хăрпăк çухаличчен силлемелле. Микстура хатĕр, унпа çулталăка яхăн усă курма пулать. Пуç ыратнă чухне микстурăна пăс çийĕн тытса ăшăтмалла, тăнлава унпа сĕрсе тутăр çыхса выртмалла.

**Пыр ыратсан е бронхит пулсан.** 1/3 стакан ăшă шыва (е 1/3 стакан кишĕр сĕткенне) 5-10 тумлам хурăн тикĕчĕ (березовый деготь) ярса кунне 3-4 хут, апат умĕн, ĕçмелле.

Тепĕр меслет. Пĕр стакан вĕри сĕте 1 кашăк пыл, çур чей кашăкĕ услам çу тата çĕçĕ вĕçĕ чухлĕ апат соди хушмалла. Пăтратса çывăрас умĕн ĕçмелле. Ыйхă килмен чухне те лайăх пулăшать ку.

**Сыпăсем сурсан.** Кунне 2-3 хут, апатчен çур сехет маларах, 100-250 мл тин кăларнă çĕр улми сĕткенĕ ĕçмелле.

**Сунасран.** Ăшă шыва пылпа (1:1) хутăштармалла. Пыл шывне кунне 2-3 хут сăмсана тумлатмалла.

## АКЦИ

# Çу уйăхĕн 30-мĕшĕччен – йӳнĕрехпе

"Хыпар" Издательство çурчĕн хаçачĕсемпе журналĕсене 2014 çулăн иккĕмĕш çурри валли почта уйрăмĕсенче çу уйăхĕн 30-мĕшĕччен 20 процент йӳнĕрех хакпа çырăнтараççĕ. Шел те, почта хăйĕн хакне пĕчĕклетмерĕ, анчах **яллă вырăнта пурăнакансене "Хыпар" хаçат çырăннăшăн пĕр кĕленче тип çу парса хавхалантарать.**

Çу уйăхĕн 30-мĕшĕ хыççăн хаçат-журнал хакĕсем мĕнле пулассине таблицăра кăтартнă.

| КĂЛАРĂМСЕМ | ÇЫРĂНТАРУ ХАКĔСЕМ | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | Почта уйрăмĕсенче | | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
| | *акци вăхăтĕнче* | *акци хыççăн* | | | |
| Хыпар | 715-32 | 744-12 | 279 | 279 | 144 |
| Хыпар-шăмат кун | 303-96 | 321-96 | 141 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | 347-16 | 375-96 | 231 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | 312-24 | 340-44 | 213 | 213 | 141 |
| Сывлăх | 199-20 | 215-40 | 111 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | 176-46 | 192-66 | 111 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | 356-28 | 379-08 | 162 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси-Кил | 176-46 | 192-66 | 105 | 105 | 81 |
| Тăван Атăл | 279-48 | 319-08 | 246 | 246 | 198 |
| Капкăн | 163-44 | 185-04 | 144 | 126 | 108 |
| ЛИК (Литература. Искусство. Культура) | 120-36 | 140-36 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | 282-12 | 310-92 | 186 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства Чувашской Республики | 629-58 | 743-58 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | 271-44 | 289-44 | 132 | 132 | 90 |
| Самант | 157-02 | 181-02 | 156 | 156 | 120 |
| Тетте | 125-52 | 143-52 | 111 | 111 | 90 |

Çакна шанатпăр: почта тытăмĕн Мускаври ертӳçисем хаçат-журнал çырăнмалли хаксене самаях пысăклатрĕç пулин те пирĕн тусăмăрсем, чăвашсем, юратнă кăларăмĕсенчен писмеççех, чун çимĕçне çырăнса илеççех. Лайăхрах тĕшмĕртсен, хаçат е журнал çур çулта миçе номер тухнине тĕпе хурсан хаксем капашсăр темеллех мар.

Çемье бюджетне тата та перекетлес текенсене, район центрĕсенче пурăнакансене, пирĕн хаçатсене, журналсене "Чăваш пичечĕн" киоскĕсенче çырăнма сĕнетпĕр.

ЧĂВАШ ЕН ЯЛ-ЙЫШ КИЛ ХŬТЛĔХ СЫВЛĂХ

ТĔПЕЛ

## КĔСКЕН

Кăçалхи пĕрремĕш кварталта республикăри вăтам ĕç укçи 19100 тенкĕпе танлашнă.

Çулталăк пуçламăшĕ тĕлне Чăваш Енре çынсен харпăрлăхĕнче 260 пин автомобиль пулнă.

Федерацин Атăлçи округĕнчи чи лайăх почтальон ятне пирĕн ентеш – Çĕрпÿ районĕнчи Опытный поселокри çыхăну уйрăмĕнче ĕçлекен Наталья Степанова тивĕçнĕ. Пултарулă почтальона скутер парса чысланă.

## СĔТЕЛĔР ТУЛĂХ ПУЛТĂР

### Хуран кукли – тăпăрчăпа, ыхра çулçипе

**Чуста валли: 400 г çăнăх, 2 çăмарта, 4 кашăк тип çу, 1 чей кашăкĕ тăвар.**

**Ăшлăх валли: 250 г тăпăрчă, пĕр çупкăм ыхра çулçи, 2 кашăк хăйма, пуçлă сухан, 1-2 кашăк услам çу, тăварпа пăрăç.**

Çăнăха тăварпа, çăмартапа, çупа, шывпа (5 кашăк) хутăштарса чуста çăрмалла. Ыхра çулçине вĕтетмелле, сухана тураса тип çупа ăшаламалла. Тăпăрча тăварпа пăрăç хушмалла, хăйма, сухан, ыхра çулçи хушса лайăх пăтратмалла. Чустана йĕтĕрпе якатмалла, стаканпа пысăках мар çаврашкасем касса кăлармалла. Ăшлăх хурса çупмалла, тăварлă шывра пĕçермелле. Хуран куклине ăшăлла хăймапа çимелле.

### Торт – 10 минутра

**400 г тăватккал печени, 400 г тăпăрчă, 1 стакан сахăр, 150 г услам çу, çур стакан сĕт, 2 кашăк какао, 2 кашăк сахăр çăнăхĕ.**

**Çиелтен сĕрме: 1 кашăк сахăр, 1 кашăк шыв, 1 кашăк услам çу, 1 кашăк какао.**

Тăпăрча çупа тата сахăрпа хутăштарса икĕ пая пайламалла. Пĕрне сахăр çăнăхĕ хушмалла, теприне – какао. Торта фольга е полиэтилен пакет çине сийĕн-сийĕн хумалла: пĕр сий печени (кашнине малтан сĕтпе йĕпетмелле), сахăр çăнăхĕпе хутăштарнă тăпăрчă, печени, какаопа хутăштарнă тăпăрчă, печени.

Çиелтен сĕрмеллине пĕçерсе унпа торта витмелле те 3 сехетлĕхе сивĕтмĕше лартмалла.

## САЛАМЛАТПĂР!



Тĕнчери чи хаклă та çывăх çыннăмăра, юратнă аннене – Çĕрпÿ районĕнчи Елÿ ялĕнче пурăнакан **Муза Ильинична ДАНИЛОВĂНА** – 90 çул тултарнă ятпа пĕтĕм чун-чĕререн саламлатпăр! Аннемĕр, йÿççине хăв çисе тутлине пире çитертĕн, сивĕ енне хăв тăрса ăшă енне пире тăратрăн. Пире, пÿрт тулли ачусене, тĕклентертĕн, çунатлантарса вĕçтерсе ятăн. Эпир санпа юнашар пулмасан та эсĕ яланах пирĕн чĕрере. Тайма пуç сана. Ĕмĕр-ĕмĕр ырă курса пурăн. Пирĕн чĕререн тухакан пехил сана çиттĕр. Пирĕншĕн чи хаклĕ – эсĕ пурри. Ан чирле, пурăнас кун-çулу вăрăм та сывлăхлă пултăр.



**Хĕрĕсем, ывăлĕсем, кинĕсем, мăнукĕсем, мăнукĕсен ачисем, тăхлачисем.**

## ПĔЛЕС ТЕНĔЧЧĔ

### Арçынна юрамасть

**Арçынсене пĕтнĕк чейĕ ĕçме юрамасть теççĕ. Сăлтавне пĕлесчĕ.**

**Михаил.**



Пĕтнĕк чейĕ – кăмăла уçăлтаракан, апат ирĕлтерес ĕçе лайăхлатакан тутлă шăршăллă шĕвек. Вăл лăпланма, йывăрлăхсем çинчен манма пулăшать. Пĕтнĕк чейĕ хĕрарăмсен чейĕ шутланнăран арçынсем ăна юратсах каймаççĕ. Мĕншĕн тесен вăл арçынсен гормон шайне чакарать. Хĕрарăмсене вара уйăх хушшине йĕркелеме, климакс вăхăтĕнче кăмăл-туйăма лайăхлатма пулăшать. Пĕтнĕк чейĕ арçынсен юнри тестостерон шайне чакарса ÿтпĕве лăштăр яма, ар пултарулăхне йăвашлатма пултарать. Çие юлнă хĕрарăмсен те пĕтнĕк чейĕ ĕçмесен аванрах, варта аталанакан ачана витĕм кÿрес хăрушлăх пур, арçын ача пулсан пушшех те.

## ЧИПЕРЛЕНЕР-И?

**Çăмрăкланма.** Банана нимĕрлемелле, 2 кашăк чухлĕ илсе 1 чей кашăкĕ сĕтпе хутăштармалла. 20 минутлăха пите сĕрмелле. Сĕтпе йĕпетнĕ ваткăпа сăтăрса тасатмалла. Банан маски пĕркеленчĕксене якатма, сăнпите уçăлтарма, çамрăкланма пулăшать.

**Куç таврашĕнчи пĕркеленчĕксене пĕтерме.** 1 кашăк пыла ирĕлтерсе лăканă çăмарта шуррипе хутăштармалла, унтан кăшт çăнăх хушса каллех пăтратмалла. Маскăна ăшăллах куç йĕри-тавра сĕрмелле. Сивĕнсен лĕп шывпа çуса ямалла.

## КИРЛĔ ПУЛĔ

- Уксус шывĕпе кантăкпа люстра таврашне тасатма аван: 1 л шыва 2 кашăк уксус ямалла.
- Çĕççе чĕрĕ çĕр улмипе тата лимон сĕткенĕпе тасатаççĕ. Вĕри шывпа çумаççĕ – хăвăрт мăкалĕ.
- Япала çинчи тутăха яма лимон кислоти пулăшĕ: вараланнă вырăна унпа йĕпетсе тутăх йĕрĕ кайиччен тытмалла, кайран ăшă шывпа чÿхемелле.
- Кухньăри тата ванна пÿлĕмĕнчи крана лимон хуппипе сăтăрмалла, унтан шывпа чÿхесе лайăх шăлса типĕтмелле – йăлтăртатса çеç тăрĕ.
- Çĕр улмине сивĕ шыва ярса пĕçерсен С витамин 40 процент таран çухалать, тÿрех вĕреме кĕнĕ шыва чăмтарсан вара 10 процент çеç.
- Вазăри чечек часах ан шантăр тесен шыва 2-3 аспирин е 3 кашăк сахăр хушмалла.
- Пĕр тан виçепе илнĕ лимон сĕткенĕпе уксуса пĕрлештермелле. Хутăша тутăх лекнĕ вырăна (тумтир, плитка, металл) сĕрмелле. Тумтире лекнине яма 15 минут кирлĕ пулсан, металл çинчине – 2 сехете яхăн. Кайран хайхи вырăна тимĕр мунчалапа сăтăрса шывпа çуса ямалла, типĕтмелле.
- Пахча çимĕçне пĕçерме шыв мĕн чухлĕ сахалтарах ярatăн – çавăн чухлĕ ытларах витамин сыхланса юлĕ.
- Цитрус çимĕçĕпе помидора сивĕтмĕшре упрамасан аванрах, мĕншĕн тесен сивĕ çĕрте вĕсен тути япăхать.
- Чукун савăт-сапана «химипе» çăвиччен ахаль тăварпа, хутпа сăтăрмалла.
- Электричествăпа ăшăтакан чейнике кăмран (накипь) тасатма унпа шывпа уксус (1:1) вĕретмелле.
- Йÿçĕ хĕрлĕ пăрăçа туранă вăхăтра сĕткенĕ çиесрен касма пуçличчен алла тип çупа сĕрмелле.

## ПУЛĂШĂР!

### Йытă хуçине кĕтет

Хисеплĕ редакци! Сирĕн пата çырма нуша хистерĕ. Пирĕн ялта пĕр йытă çухалса çÿрет. Хуçи хыççăн яла килнĕскер. Йытă хуçи пĕр арçынна хăйĕн телефонне те парса хăварнă, анчах лешĕ çухатнă. Анчăк хуçине тупасчĕ. Сунарçă йытти пулас, аça, хурапа шурă тĕслĕ, майкăчĕ пур, ăслăскер. Тĕллĕнрех ыйтса пĕлме çак телефонпа шăнкăравлăр: 8 937 370 11 92.

**Нина КУКУШКИНА. Муркаш районĕ, Çармăçкасси.**



**Александр Степанович.** 73 çулта. Пĕрле пурăнма 60-65 çулсенчи хĕрарăмпа паллашасшăн. Килĕм-çуртăм чаплă. Ĕçместĕп, туртмастăп. Т. 8 937 013 54 83.

**«Кил», «Сывлăх», «Тĕпел» кăларăмсене Елена НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

## ЧĂВАШ НАЦИ РАДИО ПРОГРАММИ (72,41 УКВ, 105 FM хумсем çинче)

**Тунти кун, çу уйăхĕн 26-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00 Поэма "Нарспи" в исполнении Ирины Чебановой. (12+) 8.10-8.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 15.30-16.00 Çĕр сум. (12+) 9.10-10.00 Не формат. (12+) 10.10-10.30, 22.10-22.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 10.30-11.00 Чĕрĕлĕх çути. (12+) 11.30-12.00 Рабочая смена. (12+) 12.10-12.30 Страхлав хыпарĕсем. (12+) 12.30-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.30-17.00 Открытый регион. (12+) 17.30-18.00 Радиовулав. (12+) 18.10-18.30 Страхлав хыпарĕсем. (12+) 18.30-19.00 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 20.30-21.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+) 21.30-22.00 Çемье ăшши. (12+) 22.10-23.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Тунти кун – эрне кун**

6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00, 22.00 - Хыпарсем. (12)

8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 - Новости. (12)

**Ытлари кун, çу уйăхĕн 27-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 21.30-22.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30, 10.10-10.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Тема дня. (12+) 9.30-10.00 Рабочая смена. (12+) 10.30-11.00 Социальный вопрос. (12+) 11.30-12.00, 22.30-23.00 Çемье ăшши. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.0 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 16.10-16.30 Эстрадный концерт. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Çĕр сум. (12+) 18.30-19.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 19.10-20.00 Чунлă эфир (12+) 20.30-21.00. Уйăхпи юмахĕсем. (6+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Юн кун, çу уйăхĕн 28-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 10.10-10.30, 11.10-11.30, 14.10-14.30,15.10-15.30, 16.10-16.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 9.10-10.00 Женская среда. (12+) 10.30-11.00 Чăваш Ен: çулсем тата çынсем. (12+) 11.30-12.00 Çĕр сум. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.30-15.00 Экономика Чувашии. (12+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.10-18.00 Пĕччен мар. (12+) 18.30-19.00 Радиовулав. (12+) 20.30-21.00 Бумеранг. (12+) 21.10-22.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 22.10-23.00 Путешествие в историю чуваш. (12+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Кĕçнерни кун, çу уйăхĕн 29-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00 Поэма "Нарспи" в исполнении Ирины Чебановой. (12+) 8.30-9.00, 22.30-23.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30, 14.10-14.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 9.10-10.00 Чунлă эфир (12+) 10.10-11.00 Пĕччен мар.(12+) 11.10-12.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав.(12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.30-15.0 Азы православия. (12+) 15.10-16.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 18.30-19.00 Чăваш Ен: çулсем тата çынсем. (12+) 19.30-20.00 Уйăхпи юмахĕсем. (12+) 20.30-22.00 Çичĕ юрă. (12+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Эрне кун, çу уйăхĕн 30-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00 Поэма "Нарспи" в исполнении Ирины Чебановой. (12+) 8.10-8.30, 10.10-10.30, 14.10-14.30,16.10-16.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Тема дня. (12+) 9.10-10.00 Не формат. (12+) 10.30-11.00 Чăваш Ен: çулсем тата çынсем. (12+) 11.10-11.30, 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 11.30-12.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.30-15.00 Çĕр сум. (12+) 15.10-16.00 Пачăшкă сăмахĕ. (12+) 16.30-17.00 Бумеранг. (12+) 17.10-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 17.30-18.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем. (12+) 18.30-19.00 Радиовулав. (12+) 19.30-20.00 Присягая Родине. (12+) 20.10-24.00 Каçхи микс. (12+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Шăмат кун, çу уйăхĕн 31-мĕшĕ**

6.05-7.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 7.05-8.00 Женская среда. (12+) 9.05-9.30, 10.05-10.30, 16.05-16.30, 19.05-19.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Чăваш Ен: çулсем тата çынсем. (12+) 11.05-11.30, 15.05-15.30, 17.05-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 9.30-10.00 Рабочая среда. (12+) 10.30-11.00 Чĕрĕлĕх çути. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (12+) 12.00-12.10 Хыпарсем. (12+) 12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. 1 пайĕ. (12+) 15.05-15.30 Концерт классической музыки. (12+) 15.30-16.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 16.00-16.10 Хыпарсем (12+) 16.30-17.00 Символ веры. (12+) 17.30-18.00 Шурăм пуç. (12+) 18.10-19.00 Иксĕлми çăлкуçсем. (12+) 19.30-20.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+) 20.05-24.00 Каçхи микс. (12+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Вырсарни кун, çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕ**

6.05-6.30, 7.05-7.30, 9.05-9.30, 18.05-18.30, 20.05-20.30 Юрă вăчăри. (12+) 6.30-7.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 7.30-8.00 Символ веры. (12+) 8.05-8.30, 11.05-11.30, 16.10-16.30, 17.05-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 8.30-9.00 Присягая Родине. (12) 9.30-10.00 Рабочая смена. (12+) 10.05-11.00 Çичĕ юрă. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. 2 пайĕ. (12+) 15.05-15.30 Концерт классической музыки. (12+) 15.30-16.00 Социальный вопрос. (12+) 16.30-17.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем. (12+) 17.10-18.00 Чунлă эфир. (12+) 18.30-19.00 Радиовулав. (12+) 19.05-20.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 20.30-21.00 Шурăмпуç. (12+) 21.05-24.00 Каçхи микс. (12+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10


## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРÿСЕМ

### ПРОДАЮ

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.

**4. Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5. Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7. Срубы для бани.** Доставка по ЧР. Т. 372874.

**9. Гравмассу, песок, щебень,** керамзит – дешево. Д-ка. Т. 89033583021.

**11. Гравмассу, песок,** щебень, керамзит, **чернозем, навоз.** Дешево. Доставка. Т. 89276689713.

**14. Станки для валяния валенок.** Т.: 89278617589, 89373810585.

**15. Кирпич, брусчатку, кольца,** ОПГС, песок, КБ. Т. 89613393363.

**16. Сетку-рабицу** от произ-ля, черную, зеленую, оцинкованную – около 100 видов, сетку сварную, **столбы,** скобы, **проволоку,** калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 89379522211.

**20. Сетку-рабицу,** ворота, калитки, заборы, кровля, обшивка домов, навесы. Д-ка. Установка. Пенсионерам **скидки.** Т.: 89022881447, 38-75-74. **metalservis21.ru**

**22. ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: 89176529694, 89276679588.

**23. Гравмассу,** песок, бой кирпича, **щебень.** Доставка. Тел. 89061355241.

**24. ГРАБЛИ, косилки, сажалки,** копалки, окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

**29. Керамблок, кирпич.** Т.378378.

**33. Гравмассу, песок, щебень,** керамзит – недорого. Доставка. Т.89053465671.

**35. Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. Т. 89373866629.

**45. Песок, гравмассу, щебень.** Д-ка.Т. 89196543499.

